Чăваш музыка искусствинче пирĕн вăхăтри паллă композиторăн Филипп Миронович Лукинăн творчестви пысăк вырăн йышăнать. Ун пултарулăхĕпе пирĕи музыкантсемпе музыковедсем çеç мар, музыкăна юратакансем те питĕ интересленеççĕ.

Ф. Лукинăн тĕрлĕ инструментсемпе выляма çырнă произведенисем нумай: сĕрме купăспа виолончель, труба, тромбон тата кларнет валли çырнă пьесăсен иĕвви илемлĕ, вĕсене юрăсем майлă хывнă. Чăваш драма театрĕнче лартнă А. Кăлканăн «Иван Кадыков», Ф. Павловăн «Ялта», Л. Родионовăн «Йăм-хĕрлĕ куле», А. Эсхелĕн «Вутлă чул» спектаклĕсенчи кĕвĕсене Ф. Лукин çырнă, вĕсене куракансем килĕштерчĕç.

Композиторăн 600 яхăн юрă-кĕвĕ: пĕччен, хорпа юрлама çырнă произведенисем (вĕсенчен çĕр ытларахăшĕ шкул çулне çитмен тата шкул ачисем валли) чăваш юрă искусствине чылай пуянлатрĕç. Чылайăшĕпе республикăри пултарулăх коллективĕсенче усă кураççĕ.

Ф. Лукин юрри-кĕввисене хамăр республикăра кăна мар, çĕршыври нумай-нумай вырăнсенче

Ф. Лукин творчестви çинчен пирĕн композиторсемпе музыковедсем статьясем сахал мар çырчĕç ĕитĕ. Анчах та ку таранччен уйрăм кĕнекен пичетленсе тухни пулманччĕ-ха. Иртнĕ çулта Владимир Харитонов поэт ырă ĕç турĕ: «Тулли кăмăлпа» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Унта композитор пурнăçĕпе творчествине сăнлана. Вăл пилĕк сыпăклă. Ф. Лукин композитор творчестви ӳссе аталанни, унăн нумай енлĕ ĕçĕсем çинчен каласа пани—кĕнеке шăнăрĕ. Художникăн шалти туйăмĕсене, тăван кĕтес илемлĕхĕпе совет çыннисен телейлĕ кунçулĕ, Ленинпа парти, комсомол тата çамрăклăх çинчен хывнă юрăсене тишкерсе ăнланма пулăшать вăл. Çакна «Ачалăх. Вĕренӳ. Пирвайхи юрăсем» сыпăкра аван уçса панĕ. Ф. Лукин маларах дирижер, каярахпа—композитор.

«Фронта—салтаксем пагне»—кĕнекен 2-мĕш сыпăкĕ. 1941—45 çулсенчи хаяр вăрçă вăхăтĕнче композитор творчествинче хăйне евĕр уйрăм йĕр куратпăр. Ф. Лукин Чăваш юрăпа ташă ансамблĕне ертсе пырать, фронтри салтаксем патĕнче нумай-нумай концертсемпе пулать.

# Çĕнĕ кĕнеке,

# ТУЛЛИ КĂМĂЛПА

тата ют çĕршывсенче те, сăмахран, Болгарире, Демократиллĕ Германи Республикинче, Венгрире илтме пулать.

Вăтăр çула яхăн Филипп Миронович педагогика ĕçĕпе çыхăннă: Шупашкарти Ф. П. Павлов ячĕпе хисепленекен музыка училищинче дирижировани класне ертсе пырать. Композитор-пропагандист, обществăлла деятель çамрăк музыкантсене тĕрĕс музыкăлла-эстетикăлла воспитани парссишĕн кулленех ырми-канми ĕçлет. Çамрăк композиторсене юрă кĕвĕлеме, ӳсме хавхалантарать: И. Степановпа И. Аршинова, Г. Маркияновпа А. Андреева, Г. Митрофановпа çак статья авторне те кирлĕ сĕнӳсем сахал мар парса композитор ĕçне-хĕлне тĕрĕс йĕркелеме пулăшрĕ.

Ф. Лукинăн пĕччен тата хорпа юрлама çырнă юрăсем нумай терĕмĕр. Сăмахран, «Салам, Мускав!», «Çамрăксен юрри», «Хăна юрри», «Туслăх юрри», «Пире партн ырлăх пачĕ». Çак юрăсемшĕн композитора 1952 çулта Государство премийĕпе парăртнă. Ку юрăсенче чăваш халăхĕн çутă ĕмĕчĕ сисĕнет, вĕсем фольклорпа таччăн çыхăннине те палăртас килет.

«Мирлĕ вăхăтра», «Ленин тата парти—юратнă темăсем» сыпăксенче композитор юрри-кеввисене юрлакансемпе, инструментсемпе вылякансемпе, хăшпĕр юрăсен «биографийĕсемпе» паллашатпăр.

«Композитор-пропагандист» — пиллĕкмĕш сыпăгç... Ф. Лукинăн нумай енлĕ пултарулăхне Совет правительстви тивĕçлипе хаклать: 60 çул тултарнă ятпа ăна 2-мĕш хут Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Кĕнекере Ф. Лукин композитор произведенийĕсен тулли мар спискокĕ те пур. Вĕсем—халăхра уйрăмах сарăлнă пĕччен тата хорпа юрлама кĕвĕленĕ, тĕрлĕ инструментсемпе выляма çырнă произведенисем.

Ф. Лукин пултарулăхĕ кунран-кунах аталанса пырать; вăл çĕнĕрен те çĕнĕ юрăсем кĕвĕлет. «Тулли кăмăлпа» кĕнеке чăваш музыка искусствине парăннă пултаруллă композиторпа паллаштарать, тăван юрра ытларах юратма, ăна упрама вĕрентет.

**Юрий КУДАКОВ,**
И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш государство педагогика институчĕн преподавателе.